# ЫРМИ-КАНМИ ЁÇЧЕН

Ырми-канми ёçчен.... Çапла калас килет чи малтан чăвашсен халăхи паллă писателĕ Юхма Мишши çинчен. Унăн кĕнекисене пирĕн ĕççыннисем яланах чунтан-чĕререн юратса кĕтсе илеççĕ, вĕсене вуласа хăйсен шухăш-кăмăлне, ĕмĕтне чăннипех те тивĕçтерекен хайлавсем тупаççĕ.

Юхма Мишши (Михаил Николаевич Ильин-Юхма) 1936 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче Чăваш республикине кĕрекен Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче çуралса ӳснĕ. Виççĕмĕш класра вĕреннĕ чухнех пулас çыравçă хăйĕн сăввисене ĕççыннисен умĕнче туха-туха вуланă, вĕсене колхозри тата шкулти стена хаçачĕсенче пичетленĕ. Аслăрах классенче чухне вара вăл районта тухса тăракан "Аван гард" хаçатăн чи активлă авторĕсенчен пĕри пулса тăнă.

Юхма Миштин пĕрремĕш кĕнеки 1962 çулта пичетленсе тухнă. Вăл - "Оксана" ятлă повесть. Унтанпа ĕнтĕ паянхи куна çитсе пирĕн халăх юратакан писательăллă кĕнекене яхăн пичетлесе кăларнă. Çыравçăн романĕсемпе повеçĕсене, сăввисемпе калавĕсене, пьесисене хамăр çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери хĕрĕх ултă чĕлхене куçарнă.

Чăваш çĕрĕ нумай нумай талант çуратса тĕнчене парнеленĕ. Юхма Мишши вĕсенчен пĕри. Унăн кун-çулĕ пирĕн самана биографийĕпе тачă çыхăннă. Вăл вĕреннĕ чухне çĕнĕ çĕре тырпул пуçтарма каять. Аслă шкул пĕтернĕ хыççăн шкулта ачасене вĕрентет, хаçат, кĕнеке издательствинче, краеведени музейĕнче ĕçлет. Çакă писатель пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварать. Юхма Мишши чăваш хресчченĕсен йăли-йĕркине, ялти çынсен ĕçне-хĕлне, кăмăл-шухăшне, ĕмĕтне çине тăрсах тĕпченĕ. Ĕç хыççăн вăййа тухнă, акатуйсене тата ытти халăх уявĕсене çӳренĕ, ялти ватăсем-

пе тĕл пулса каласнă. Халăх каласăвĕн хăйне евĕрлĕ илемĕне киленнĕ, халăх юрри сăввин уйрăмлăхне ăнланма, халăх каларăшĕсемпе юмахĕсене легендăсемпе преданийĕсене астуса юлма тăрăшнă. Çакă унăн пултарулăхĕнче - иксĕлми пуян çăлкуç. Халĕ Юхма Мишши тăван литературăмăрăн чи пултаруллă ĕçченĕсенчен пĕри. Унăн ятне хамăр республикăра çеç мар, пĕтĕм çĕршывĕпех лайăх пĕлеççĕ.

Писателĕн тавракурăмĕ, пултарулăх тӳпи парти идеологийĕпе, пурнăç чăнлăхĕпе тачă çыхăнса тăрать. Çакă унăн историлле темăпа çырнă произведенийĕсенче те уçăмлăн палăрать.

"Кăвак çĕмрен" нумай сюжетлă историллĕ роман. Унта писатель чăваш халăхĕн чи маттур ывал-хĕрĕсем Емельян Пугачев ертсе пыракан хресчен вăрçине анлăн хутшăннине ăста, чăн-чăн художник куçĕпе, истори чăнлăхне хальхи самана хушнă пек уçса çырса кăтартать. "Юрăçă шăпи" историлле повеçре автор шурă патша саманинче пултаруллă çынсен шăпи мĕн тери телейсĕр пулнине анлăн, тĕрлĕн енлĕн, ĕненмелле çырса парать. Писателĕн истори темипе çырнă кĕнекисенчен чи паллăраххи - "Элпи чечекĕсем". Кунта легендăсем, преданисем, калавсем тахçан пулни-иртни, пишшер çулсем хушши халăх асĕнче пурăннă паттăр ĕçсем. Вĕсем, писатель ăсталăхне пула, çĕнĕрен вăй илнĕ, чĕрĕлсе тăнă, çавăнпа куç умĕнче пулса иртекен ĕç евĕр уççăн курăнаççĕ. "Пурнăç чечекĕ, чăваш литературин чечекĕ", тесе хак пачĕ çак кĕнекене вырăссен паллă писателĕ тата критикĕ Леонид Кудреватых. "Вăл ирĕн вулакансен умĕнче чи юратнă кĕнекесенчен пĕри пулчĕ", - терĕ "Элпи чечекĕсем" пирки Чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ.

"Мускав çулĕ" роман-легенда Юхма Мишшин тĕп произведенийĕсенчен пĕри. Унти ĕçсем XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртеççĕ. Унти тĕп сăнарсенчен пĕри Чулхула ополченийĕ майлă пулса тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн паттăррăн кĕрешнĕ чăваш çарпуçĕ Пăрттас. Унăн сăнарĕ халăх характерĕнчи чи паллăрах енĕсене уçăмлăн çутатса парать. Парттас - пысăк чун хавалпă çын, пурнăç чăнлăхĕшĕн çине тăрса кĕрешет, кирлĕ чухне савăнма та, ыттисем пекех хурланма та пултарать.

"Мускав çулĕ" кĕнекере халăх çĕкленĕвне, çичĕ юта çĕнтерес текен патриотла ĕмĕтне анлăн кăтартса панă. Çакăнта ĕнтĕ унăн философилле пысăк пĕлтерĕшĕ. Ку произведение автор илемлĕх йĕркисене пĕлсе, характер аталанăвĕн тĕп йĕрĕсене шута хурса, историе пĕлсе çырнă. Ахальтен мар ĕнтĕ ку роман пирки Мускаври хаçат-журналсенче ырă сăмах пайтах пулчĕ. "Мускав çулĕ" чăваш историйĕн илемлĕ хрестоматийĕ", - хакларĕ ăна филологи наукисен докторĕ М.Р.Федотов профессор, Чăваш халăх писателе Александр

Артемьев çапла çырчĕ: "Мускав çулĕ" - талантлă художник çырнă произведени. Писатель хăй умне лартнă задачăна тĕрĕс та ăста татса пама пултарнă. Вак халăхсем кўршĕллĕ аслă вырăс халăхĕпе пĕрлешсе тăванлашни, çак çирĕп туслăх пĕтĕм Руç çĕрне иксĕлми хăват пани, тăванла халăхсене пур çичĕ юта хирĕç паттăррăн тăма, çĕнтерме хавхалантарни - акă романăн никĕсĕнчи чăн çирĕп, пысăк чул, произведени теми, содержанийĕ. Пусмăрти чăваш халăхĕн те, ытти вак халăхсенни пекех, тăнăç пурнăçĕ, телейĕ Мускав çулĕ çинче, вăлМускав урлă килет - çакă романăн тĕп идейи. Çак шухăша писатель яруççăн курăнмалла ўкерчĕксемпе кăтартса, ĕненмелле хĕрўллĕн, витĕмлĕн каласа парать."

Писателĕн юлашки çулсенче тунă чи ăнăçлă ĕçĕсенчен пĕри вăл "Кункăш - вилĕмсĕр кайăк" историлле роман. Ăна Мускаври Политиздат "Çулăмлă революционерсем" ярăмпа виççĕр пин тиражпа пичетлесе кăларчĕ. Кĕнекери тĕп сăнар - Муллануур Вахитов, тăванла тутар халăхĕн паттăр ывăлĕ, аслă Ленинăн хастар соратникĕ, чăнчăн интернационалист. "Кункăш - вилĕмсĕр кайăк" тăван литературăри талантлă Лениниана шутне кĕрет. "Ку произведение çырса, писатель чăннипех те интернацилле паттăрлăх кăтартрĕ", - тесе хакларĕç пирĕн писателе тутар çыравçисем.

Хальхи вăхăтра Юхма Мишши вулакансем патне тата икĕ историлле роман çитерчĕ: "Эткер" тата "Анне çăкăрĕ". Вĕсенче писатель чăваш халăхĕн иртнĕ кунçулне анлăн кăтартнă, çав хушăрах чăвашсем ирĕклĕхшĕн, çутта тухасшăн епле ăнтăлнине, ку ĕçре вĕсене вырăссен чи лайăх ывăл-хĕрĕсем çине тăрсах пулăшса пынине те куратпăр. "Эткер" романăн тĕп геройĕ пирĕн халăха çутта кăларассишĕн ырми-канми ĕçлепĕ И.Я.Яковлев. Ку произведени пирĕн Лениниана шутне те кĕрет. Унта эпир Илья Николаевич сăнарне те, Володя Ульянов сăнарне те куратпăр, вĕсене автор пысăк ăсталăхпа, чăнлăха курса, ĕненмелле çутатса панă. "Эткер" тата "Анне çăкăрĕ" романсем писатель ăсталăхĕ ўсnине, тавракурăмĕ аслăланнине, вăл пурнăç тата пуласлăх умĕнче хăй мĕн тери яваплă пулнине тĕппи-йĕрĕпех ăнланса илнине кăтартаççĕ.

Юхма Мишши нумай енлĕ, тĕрлĕ жанрпа ĕçлекен писатель. Историлле произведенисемпе пĕрлех вăл ача-пăча валли те пайтах сăвăкалав, повесть, юмах, пьеса çырчĕ. Вĕсенчен паллăраххисем - "Çăлтăрсем чĕнеççĕ", "Шурщăл ачи", "Палăк", "Шуракăш тĕкĕ", "Шурçамка", "Пакша вăрманĕ" повеçсем. Вĕсенче автор хăйне евĕрлĕ темăсем, проблемăсем тупса çĕклет, хăй чăн-чăн ăста пулнине ĕнентерўллĕ кăтартса парать. Писатель ачасене "Хĕвел хăлхи" тата "Пухрĕ хăнасем Элпи" ятлă сăвăлла кĕнекесем те парнелерĕ. Вĕсен-

чен чылайăшне чăваш тата ытти халăхсен шкулта вĕренмелли кĕнекисене те кĕртрĕç. "Шурçамка" повеçе пĕр вăхатрах Европăри çиче чĕлхепе пичетлесе кăларчĕç, ку - чăваш писателĕн çырас ăсталăхне пысăка хурса хаклани.

Юлашки çулсенче писатель ачасем валли пьесăсем çырнипе те палăрчĕ. Республикăри çамрăксен театрĕ унăн "Трактор килнĕ кунхи пăшал сасси" пьесине лартса пачĕ. Куита вăл колхозсем тунă тапхăр ти чăваш ачисен паттăрлăхне уçса кăтартать. Писатель уйрăмах пукапесен театрĕпе туслă ĕçлет. Республикăри пукане театрĕ унăн вунă ытла пьесине лартса куракансем патне çитерчĕ. Халиччен пирĕн пукане театрĕ валли çырнă драматурги пулман, çавăнпа Юхма Мишши çырнă пьесăсен пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк, вăл хăй пьесисемпе чăваш драматургин çак пайне çĕклесе ячĕ. Ку тĕлĕшĕнчен Юхма Мишшин "Пўрнескепе унăн тусĕсем", "Улăм пуканс", "Чуста патăр", "Мулкач валли шурă кĕрĕк", "Итлемен чăх чĕппи" пьесисем ырă ята тивĕçлĕ, ахальтен мар ĕнтĕ ку хайлавсене вырăс, украина, литва, казах чĕлхисене те куçарнă, унти театрсенче те лартнă.

Çав хушăрах çыравçăн драма театрĕсем валли çырнă пьесисене те ырă сăмахпа палăртмалла. "Уйăх тулнă кас", "Кашнин хăйĕн телейĕ", "Тĕлĕнтермĕш мыскара", "Мĕн-ши вăл ирĕклĕх?" пьесисем пирĕн республикăри профессиллĕ театрсенче те, халăх театрĕсенче те анлăн кăтартаççĕ.

Юхма Мишши кулăшла питлев жанрĕнче те ăнăçлă ĕçлет. Унăн "Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле" юптарусемпе питлевсăввисен кĕнекине пирĕн критика та, вулакансем те хапăл туса йышăнчĕç. Унсăр пуçне писатель "Çуралнă кун", "Асамлă вырăн" ятлă кулăшла калавсен кĕнекисене пичетлесе кăларчĕ. Ку тĕлĕшĕнчен çыравçă Путĕш Па тян сăнарне çĕнĕрен чĕртсе халăх патне çитерни пирĕн культурăшăн уйрăмах пысăк ĕç пулса тăнине палăртмалла. Францире тухса тăракан "Турчика" журнал писателĕн çак ĕçне палăртса, "вăл чăвашсен Ходжа Насредтинне тĕнчене парнелерĕ" тесе çырчĕ.

Юхма Мишши пурнăçпа тан утакан писатель. Эпир час часах унăн çулăмлă чĕрепе, хальхи пурнăç мĕн хушнине тĕп тĕн ăнланса çырнă очеркĕсемпе публицистикăлла статьисене чăваш хаçачĕсенче кăна мар, Мускавра тухса тăракан "Правда", "Известия", "Литературная газета", "Советская Россия" хаçатсенче тата журналсенче куратпăр. Писатель Шупашкарти тата Мускаври радиопа та, телевиденипе те калаçать, парти тăратнă задачăсене халăха ăнлантарса парассишĕн активлă ĕçлет. Ахальтен мар ĕнтĕ хăйĕн пĕр сăввинче вăл çапла çырать:

Эп - хам сăмахăн ялавçи,
Эп чăнлăхшăн çула тухатăп:
. Пĕр чăнлăх çеç телей арчи,
Ăна эп пурнĕрех тупатăп...

Юхма Мишшин поэзийĕ çинчен калас пулсассăн, вăл метафорăсемпе, хăй евĕрлĕ танлаштарусемпе, çĕнĕлле тунă эпитетсемпе пуяннине палăртмалла. Уйрăмах вăл халăх пултаруллăхĕпе ăнăçлă усă курать. Çирĕм çул ытла каярах Юхма Мишшин çак ырă енĕсене палăртса, Петĕр Хусанкай ун çирки "кашни сăмаха ăнланма тăрăшать, халăх пултаруллăхĕн хăйнеевĕрлĕхне лайăх пĕлет, халăха кирлĕ япаласем çырать" терĕ.

Писатель куçару ĕçĕпе те ăнăçлă ĕçлет. Вăл вырăс, тутар, грузин, литва, казах, украина писателĕсен хайлавĕсене нумай куçарса чăваш вулаканĕсем патне çитерчĕ.

Çакна çирĕплетсе калас килет: кирек мĕнле жанрпа ĕçлесессĕн те, Юхма Мишшин хăйĕн стилĕ, хăйĕн çырас меслечĕ, вулакансем вăл çырнине нихăçан та ыттисен хайлавĕпе арпаштарас çук; çакă хаклă та литературăра. Çав хушăрах унăн чĕлхи - халăх чĕлхи: çивчĕ, сăнарлă, яка, техĕмлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл "Анне çăкăрĕ" романра "тăван чĕлхе вăл халăхăн сăваплă та чи таса, чи хаклă пурлăхĕ", - тесе хавхаланса çырать.

Пирĕн ырми-канми ĕçчен, талантлă писатель 50 çул тултарчĕ. Пĕтĕмлетсе çапла калама пулать. Юхма Мишшин пĕтĕм пултарулăхĕ халăх пусмăрçисене хирĕç çине тăрса, вĕçне çитиччен кĕрешме чĕнекен идейăпа тачă çыхăннă. Çавăнпа унăн произведенийĕсем çынсене çывăх та ĕнтĕ. Вĕсем тĕнчери хăшпĕр халăха халĕ те çаплах тертлентерсе пурăнакан чуралăха, пусмăра тата мăшкăла курайми пулма вĕрентеççĕ, паттăр, чăн-чан патриот, интернационалист пулма чĕнеççĕ. Юхма Мишши тăван халăх историне, йăли-йĕркине, культурине чун тан хисеплет, юратать. Унăн пултарулăхĕ - хăйĕн шухăшне, сăмахне, литературăри нацилле формăпа калама тăрăшни, тăван чĕлхен илемĕпе вăй-хăватне тĕнчене кăтартас, çапла майпа ĕçчен те ăста, пуласлăха шанакан, пуласлăхшăн кĕрешекен тăван халăхăмăрăн шухăш-кăмăл хăватне çĕклес тени. Çакна шута илсе ĕнтĕ писателе Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă. Ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп Грамотипе, КПСС Чăваш обкомĕн, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Хисеп Грамотипе, Мускавра тухса тăракан "Сельская жизнь" хаçатăн "Пичет активисчĕ" кăкăр çине çакса çÿремелли палăпе наградăланă. Тăванла литературăсен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетессишĕн тăрăшса ĕçленĕшĕн Воронеж об-

исполкомĕн Хисеп Грамотине панă. Юхма Мишши "Отличник культурного шефства над селом" хисеплĕ ята илме тивĕç пулнă.

Юхма Мишши - Пĕтĕм Совет Союзĕпе иртнĕ "Земля и люди" литература конкурсĕн лауреачĕ. Унсăр пуçне вăл "Волга" тата "Советская женщина" журналсен премине илме тивĕç пулнă. Ялти çынсем çинчен ăста произведенисем çырнăшăн ăна Елчĕк районĕнчи "Прогресс" колхозăн "Ылтăн пучах" премине тата рабочи класс пурнăçне тĕрĕс те талантлă çутатса кăтартнăшăн Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕн "Атăл паттăрĕ" премине панă.

Юхма Мишши пултарулăхĕ, ăсталăхĕ ӳссех пырать. Вăл яланах çынсен пурнăçне тинкерсе пăхать, хăйĕн кĕнекисем валли вирлĕ те хастарлă, çĕкленӳллĕ кăмăллă, кĕрешӳве антăлма хатĕр ĕçченсене суйласа илет. Унăн кашни кĕнекинчен кĕнекине хăй çуралса ӳснĕ çĕре, çав çĕрĕн çыннисене чунтан юратни куçса пырать. "Кашниех хăй çуралса ӳснĕ çĕре юратать, - тет Юхма Мишши. - Эпĕ те Чăваш çĕрне аттесен-асаттесен çĕрне юрататăп". Хăйĕн вулаканĕсене те çак юратăва тупма вĕрентет.

*27.09.86.*